Октябрĕн 6-мĕшĕнче «Росгосстрах» 87 çул тултарать

# Малашлăха шанса ĕçлет тата пурăнать

**Çитес тунти кун «Росгосстрах» хăйĕн черетлĕ çуралнă кунне паллă тăвать. Раççейре страховани енĕпе ĕçлекен çак тĕп организаци йĕркеленнĕ куна Страховщиксен кунĕ тесе йышăнни те асăннă организацин çĕршыв тытăмĕнчи вăй-халне кăтартать. Мĕншĕн тесен страховани услугисен Раççей рынокĕн аталанăвĕ тĕпренех «Госстрах» – каярахпа «Росгосстрах» – аталанăвĕпе çыхăннă. Епле пурăнать тата мĕнле аталанать районти кашни çыншăнах паллă çак страховани организацийĕ?**

– «Росгосстрахра» ĕçлесси мана питĕ килĕшет. Эпир çынсемпе ĕçлетпĕр, вĕсен пурнăç тата аталану утăмĕсемпе тан пыратпăр. Кулленхи ĕç эпир халăхăмăра пырса тивекен нумай ыйтусене вăхăтра та тĕрĕс татса пама пултарнине кăтартса парать. Çавăнпах пирĕн патăмăртан халăх татăлмасть, – тет калаçăвăмăра пуçланă май «Росгосстрах» компанин Муркашри Страхлакан пайĕн ертӳçи Валерий Иванович Вязов.

Пуçлăх калани – компанин тĕп енĕ. Мĕншĕн тесен «Росгосстрах» – филиалсемпе анлă сарăлнă Раççейри пĕртен-пĕр страхлакан организаци. Ăна ку тĕлĕшпе Раççей Федерацийĕн почтипе тата перекет банкĕпе танлаштарма пулать. Çакнашкал масштабпа усă курса çынсем страховкăна ăçта пурнăçланине пăхмасăрах «Росгосстрах» услугисемпе Раççейĕн кирек хăш регионĕнче те туллин усă курма пултараççĕ. Халĕ каланине шута илсе эсир хăвăра ыранхи кунра шанчăклă курас тесен страхланасси пирки паян шутламалла. Пурнăçа, пурлăха, куçман пурлăха, автомобиле тата тин кăна пуçарнă ĕçе страхлани сире кулленхи йывăрлăхсемпе кĕрешме пулăшасса «Росгосстрахра» шанаççĕ. Анчах манма кирлĕ мар, страховани услугисен паянхи рынокĕ пуян та тĕрлĕ енлĕ. Çиччĕ виççе пăхма ӳркенекене çак кăткăс лару-тăрура çухалса кайма та часах. Çапла ан пултăр тесен пурнăç ăслăлăхĕнчен ан пăрăн: вăхăт кăтартнине шанса суйласа ил те – йăнăшмăн.

«Росгосстрах» компанисен ушкăнĕ «Росгосстрах» уçă акционерлă обществăран, 3 регионти тата регионсем хушшинчи 7 страховани компанийĕнчен, «Росгосстрах – Жизнь» страхлакан компани» чикĕллĕ яваплăхлă обществăран (унăн тĕп тивĕçĕ инкек-синкекрен тата чир-чĕртен страхласси, ирĕклĕ пенси страхованийĕ), обязательнăй медицина страхованийĕ тăвакан «Росгосстрах – Медицина» чикĕллĕ яваплăхлă обществăран тăрать. Ушкăнсене 3 пин агентство, страхлакан пайсем, тă



каксене йĕркелекен центрсем кĕреççĕ. Çапла вара «Росгосстрах» компанире ĕçлекенсен йышĕ пĕтĕмпе 97 пин çынран иртет. Вăл шутра агентсен йышĕ – 60 пин çын ытла.

**ĂРУСЕН ШАНЧĂКĔ**

«Росгосстрахăн» историйĕ пуян, унăн ĕçĕ курăмлă. Вăл 1921 çулта РСФСРта йĕркеленнĕ «Госстрахăн» ĕçне малалла тăсаканĕ. Çак çӳллĕшрен пăхсан, асăннă страхлакан компание пирĕн асатте-асаннесем те кăмăллани курăнать. Апла пулсан çак компанин услугисемпе пĕр ăру кăна мар ӳссе çын пулнă.

– Çакна шута хурса, атте-аннесен çулсем иртнипе тĕрĕсленнĕ суйлавне пăсмасăр, эпĕ хам та «Росгосстрахăн» яланхи клиенчĕ, – тет малалла Валерий Иванович. – Манашкал шухăшпах районти кашни иккĕмĕш пурăнакан «Росгосстрахпа» тачă çыхăну тытса страхланма çулленхи килĕшӳсем тăвать. Эпир вĕсене пире шаннăшăн тав тăватпăр, вĕсен суйлавĕпе мухтанатпăр.

«Росгосстрах» компанин Муркашри Страхлакан пайĕ пĕтĕмĕшле ĕç коллективĕн пĕчĕкçĕ пайĕ кăна. Кунта 53 страхлакан агентпа 8 штатлă сотрудник вăй хуçаççĕ. Апла пулин те, вĕсен ĕçĕ районта пурăнакан кашни çыннах пырса тивет. Кăçалхи 9 уйăхра вĕсем район çыннисене 15,6 миллион тенкĕлĕх страховани услугисем панă. Ку вăл иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен 2 миллион тенкĕ ытларах (114 процент). Пĕрлехи тăрăшулăхпа январь - сентябрь уйăхĕсенче 3 миллиард ытла тенкĕлĕх пурлăха страхларăмăр.

Чăваш Енри «Росгосстрах» уйрăмĕ паян 130 ытла страховани енĕсемпе (виды страхования) ĕçлет. Халăх хушшинче çирĕп никĕсленнĕ страховани енĕсемпе пĕрлех (пӳрт-çурта, килти пурлăха, выльăх-чĕрлĕхе, автомототранспорта, пурнăçа тата ыттисене те страхласси) компани çĕнĕ страховани енĕсене пурнăça кĕртсе пырать. Кусем: «РОСГОССТРАХ КИЛ - ÇУРТ» тата «РОСГОССТРАХ–ХВАТТЕР» тата яваплăха страхласси. Кусемпе пĕрлех пурнăça «РОСГОССТРАХ – БИЗНЕС», «РОСГОССТРАХ – БИЗНЕС «ТОРГОВЛЯ» программăсем кĕрсе пыраççĕ. Вĕсем предприятисемпе пĕчĕк бизнеса тĕрлĕ инкексенчен шанчăклă хӳтĕлеççĕ. Кăçал кăна ятарлă страховани продукчĕ пурнăça кĕчĕ: «РГС – РЕСТОРАТОР». Ку енре обществăлла апатлану предприятийĕсемпе (ресторансем, кафесем, барсемпе пиццерийсем) çак сферăра услугăсем паракансен пурлăх тата финанс интересĕсене хӳтĕлеме пăхнă.

**«РОСГОССТРАХĂН» ТĔП ПУЯНЛĂХĔ – ÇЫНСЕМ**

– Паянхи куна «Росгосстрах» Раççейри страховани рынокĕн лидерĕ шутланса тăрать. Ку вăл вăхăтлăх парне мар. Ăна эпир кулленхи ĕçпе çĕнсе илнĕ, алăран вĕçертмесĕр çултан çула тăсса пыратпăр. Хамăр ĕçпе кăна эпир хамăр шанчăклă пулнине кăтартатпăр, – малалла каласа парать Валерий Иванович «Росгосстрах» компанин Муркашри Страхлакан пайĕн ĕçченĕсем çинчен калаçу пуçарнă май. Вĕсем хушшинче ырă ята тивĕçлисем вара çук мар. Чылайăшĕ хăйсен ĕç ĕмĕрне тĕппипех «Росгосстрахпа» çыхăнтарнă. Вĕсем паян кунччене ял çыннисемшĕн кĕтнĕ хăнасем.

– Хам ĕçĕме урăх çĕрте курмастăп. Страховани ыйтăвĕсемпе халăхпа тĕл пулса калаçман кун çук. Калаçатпăр, ăнлантаратпăр та вырăнтах страхлатпăр. Халăх пире шанни çĕнĕ услугăсене пурнăça кĕртсе вĕсем патне илсе çитерме хавхалантарать. «Росгосстрахра» çапла ĕçлесе сисмерĕм те – 34 çул хыçа юлчĕ. Çапах ĕçлес туйăм сӳнмен-ха. Кунта халăх хамăр пата кăмăллă пулни пулăшать, – ĕçри пуян опытне пытармасăр калаçать «Росгосстрах» агенчĕ, Вомпăкассинче пурăнакан Юлия Семеновна Пикушкина **(сăн ӳкерчĕкре).** Çакнашкал ӳсĕмрех Эмма Николаевна Антонова (Ильинка), Валентина Константиновна Сальникова (Шурча), Галина Васильевна Яковлева (Çатракасси), Лена Автономовна Кондукторова (Москакасси), Валентина Владимировна Алаева (Катькас), Нина Андреевна Калашникова (Кашмаш) та.

Пуян опытлă тата халăх хушшинче ырă ят çĕнсе илнĕ агентсем «Росгосстрах» компанин Муркашри Страхлакан пайĕнче татах пур. Вĕсен йышне хăюллăнах Л. Седлована, Л. Малышевана кĕртме пулать. Иккĕленӳ çук, Страхлакан пайра пуян опытлă ĕçченсемпе тулли энергиллĕ çамрăксен пĕрлехи тăрăшулăхĕ пĕр пулни аталанăвăн çулне уçса пырать. Çакна кура клиентсен бази те сарăлать.

Районта «Росгосстрахпа» тачă çыхăнса ĕçлекен предприятисем те сахал мар. Вĕсен хушшинче перекет банкĕ, «Россельхозбанк», «Ударник» тата Ильич яч. хис. хуçалăхсем, «Моргаушрайбыт» чикĕллĕ яваплăхлă общество, И. Н. Никитин индивидуаллă предприниматель, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики, «Муркашри кирпĕч завочĕ» уçă акционерлă общество т. ыт. те.

– Эпир пирĕнпе çыхăну тытакансене пурне те хавас. Май килнипе паян пурсăра та «Росгосстрах» 87 çул тултарнă ятпа саламлатăп. Эпир хамăр компанин иртнĕ кун-çулĕпе мăнаçланатпăр, ăна пуянлатма кунсерен хамăр пултарулăха хыватпăр, малашлăха шанчăклă пăхатпăр. Сирĕн килĕрсенче телей те хăтлă пурнăç хуçалантăр! Хăвăрăн та, ачăрсен те сывлăх пултăр! Пирĕнпе пĕрле пулсан ыранхи кун та сирĕншĕн телейлĕ пуласса шанатăп, – тесе вĕçлерĕ хăйĕн сăмахне «Росгосстрах» компанин Муркашри Страхлакан пайĕн ертӳçи Валерий Иванович Вязов.

Çапла пултăрччĕ.

**А. БЕЛОВ.**

Килти хушма хуçалăх

# Сысна çури тутлă çиесшĕн

Сысна нимĕн те тиркемест. Кĕр çитнĕ май ăна тăрантарма çĕр улми те, кăшманĕ те, кишĕрĕ те каять. Хурса парса кăна ĕлкĕр тейĕ хăшĕ-пĕри. Анчах вĕсем чĕр чунсен вар-хырăмĕнче лайăх ирĕлччĕр тесен, апата пĕлсе хатĕрлемелле. Çакăн çинчен пулĕ пирĕн паянхи калаçу.

**Çĕр улми** сыснашăн питĕ паха апат. Унра 22 процент типĕ япаласем. Вĕсенчен 14 проценчĕ – крахмал. Çак çимĕçри тĕп белок – туберин – биологи тĕлĕшĕнчен сыснасемшĕн уйрăмах пĕлтерĕшлĕ.

Çĕр улмине выльăха пĕçерсе е пăспа çемçетсе памалла. Çапла тусан крахмал лайăх ирĕлет. Манмалла мар, çĕр улмине пĕçернĕ чух унран чĕр чунсемшĕн сиенлĕ соланин тухать. Çавăнпа та пĕçернĕ шыва тăкмалла.

Çимĕçе малтанах пĕçерсе хумалла мар. Вăл ăшă çанталăкра 5-6 сехетрен йӳçме пуçлать. Унпа сыснасене сивĕнсе çитичченех тăрантармалла. Савăтне çийĕнчех çумалла.

Пĕçернĕ çĕр улмине 100 килограмлă сыснана 6-7 килограмм çитерме юрать.

**Топинамбур (çĕр грушши)**. Тутлăхлă япаласен тытăмĕпе вăл «иккĕмĕш çăкăра» çывăх. Унра вăтамран 22 процент типĕ япаласем. Вĕсен 17 проценчĕ крахмал тата сахăр. Унсăр пуçне топинамбур минераллă япаласенчен тата В ушкăна кĕрекен витаминсенчен пуян. Çĕр грушине те çĕр улми пекех хатĕрлемелле.

**Выльăх кăшманĕ** типĕ япаласен шучĕпе çĕр улмине çитеймест (12 процент). Унăн типĕ япалисем ытларах углеводсенчен тăраççĕ. Вĕсенче сахăр тата пектин элеменчĕсем нумайрах.

Çак тымар çимĕçе сыснасене чĕрĕлле талăкра 1-2 килограмм таран пĕçерсе е пăспа çемçетсе çитерме юрать. Анчах кунта та тимлĕ пулмалла. Майĕпен сивĕннĕ чухне кăшманри ятарлă бактерисем «тăрăшнипе» нитратсем тухаççĕ. Çавăнпа та пĕçернĕ кăшман 5-12 сехетрен юрăхсăра тухать.

**Сахăр кăшманĕнче** типĕ япаласем икĕ хут нумайрах. Анчах унпа та 35 килограмран пĕчĕкрех сыснасене тăрантарма юрамасть. Сыснасем ăна чĕрĕлле те юратса çиеççĕ. Апла пулин те 100 килограмлă выльăха талăкра икĕ хутчен, пурĕ 6-8 килограмм çеç пĕçерсе çитерме тăрăшăр. Сахăр кăшманĕпе январь вĕçлениччен кăна усă курăр. Нумайрах упрасан вăл тутлăхлă япалисене çухатать.

Кĕр кунĕсенче сыснасене симĕс курăкпа тивĕçтерни те выльăхсен апат анаслăхне ӳстерет.

**В. ИЛЬИН, выльăх тухтăрĕ.**

# Улма-çырла йывăççисем лартăр



***– Юлашки çулсенче ял çыннисем виноградпа груша ытларах туянма пуçларĕç, – терĕ кĕске калаçура Муркаш пасарне улмуççисем сутма килекен Геннадий Прокопьевич Скворцов. Катькас ял тăрăхĕнчи Шатракассинче пурăнаканскер, улмуççисемпе грушăсен, сливăсемпе виноградсен тата ытти улма-çырла йывăççисен калчисене тăвассипе 10 çул каялла ĕçе пуçăннă.***

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Çĕнĕ рубрика – «Милици кунне халалласа»

# Вĕсем – лăпкăлăх никĕсĕнче



Юпа уйăхĕн 1-мĕш вырсарни кунĕ – Раççей Федерацийĕнчи уголовнăй шырав ĕçченĕсен кунĕ. Кăçал кунта хăйне евĕр паллă: уголовнăй шырав 90 çул тултарать. Çак сумлă куна мĕнле кăтартусемпе кĕтсе илеççĕ-ха районти шалти ĕçсен пайĕн уголовнăй шырав ĕçченĕсем?

Çакна каламалла, пĕлтĕрхи 9 уйăхра шалти ĕçсен пайĕ районта пулнă преступленисен 72,3 процентне уçса панă пулсан, кăçал ку кăтарту 78,5 процента çитнĕ. Кунта уголовнăй шыравăн тӳпи пысăкки куç умĕнчех. Танлаштарса пăхсан, республикăри çак кăтарту 64,5 процентпа танлашать. Апла пулсан Муркаш милицийĕн ĕçĕ ыттисемшĕн те тĕслĕхре.

Уголовнăй шырав ĕçченĕсем преступленисемпе уçса парас ĕçре яланах малти ретре. Паян çакăнта вăй хуракансем **сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла** (малтисем: уголовнăй шырав пайĕн пуçлăхĕ О. Потряков, криминаллă милици пуçлăхĕ Е. Плечов; иккĕмĕш ретре: аслă оперуполномоченнăй М. Мясников, оперуполномоченнăйсем И. Макаровпа С. Егоров тата Г. Краснов).

– Хамăр ĕçе пĕлетпĕр, районти лăпкăлăхшăн ответлăха туятпăр. Çак ĕçре унччченхи çулсенче ĕçленĕ юлташăмăрсен П. Яковлевăн, Ю. Соловьевăн, Г. Ефимовăн, А. Бочкинăн, Н. Карповăн, О. Григорьевăн, Ю. Степановăн, В. Семеновăн, В. Сильвестровăн, В. Федоровăн, В. Яковлевăн, А. Ивановăн, А. Шишкинăн, А. Колбасовăн, А. Даниловăн, А. Лаврушкинăн, С. Цветковăн ырă пуçарăвĕсене малалла аталантарса пыма тăрăшатпăр. Вĕсене те, паян çак структурăра вăй хуракансене те уяв ячĕпе саламлатăп, ĕçре ăнăçу сунатăп. Тав сăмахĕ хамăр ентешĕмĕре, ЧР ШĔМĕн министрĕ пулнă М. Киселева. Вăл тимленипе уголовнăй шырав пайĕ çĕнĕ «Жигулиллĕ» пулса тăчĕ. Пысăк тав! – терĕ кĕскен Е. Плечов уявпа пурне те саламласа.

# Çул çинчи йĕркелĕхшĕн



Кăçалхи 9 уйăх сисĕнмесĕрех хыçа юлчĕ. Мĕнпе палăрчĕ-ха вăл район территорийĕнчи автоçулсем çинче? Тӳрех каламалла: савăнмалли нимех те çук. Акă кăçалхи январь – сентябрь уйăхĕсенче Муркаш енри тĕрлĕ харпăрлăхлă автоçулсем çинче автомототранспортпа 47 авари пулчĕ. Вĕсенче 11 çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлчĕ, 57 çын тĕрлĕ сурансемпе больницăна лекрĕ. Çак хисеп иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен пĕчĕкрех пулсан та, автоçулсем çинчи йĕркесĕрлĕхсем çине куç хупмалла тенине пĕлтермест. Мĕншĕн тесен иртнĕ çул ачасемпе пулнă аварисем сахалрахчĕ пулсан, кăçал 8 ача аманса больницăна лекрĕ. Ку, паллах, пурне те шухăшлаттармалла.

Аварисенчен ытларахăшĕ (11 тĕслĕх) техника хатĕрĕсем хирĕç килекен çул çине тухса кайнипе пулни водительсене çул-йĕр правилисене çирĕпрех пăхăнма ыйтать. 8 тĕслĕхĕнче водительсем ӳсĕр пулни тата 6 тĕслĕхре руль умĕнче лараканăн водитель прави пачах пулманни те кашниншĕнех тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳ тумалли сăлтав. Мĕншĕн тесен çул çинче санпа юнашарах ытти çул çӳрекенсем те пуррине манас марччĕ.

Паян районти патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕнче 6 çын ĕçлет пулсан та, çул çине тухакансем хăйсем çул-йĕр правилисене пăхăнмасан тата вĕсене сĕмсĕррĕн пăссан çулсем çинче тивĕçлĕ йĕрке пуласси иккĕлентерет. Çавăнпа та çул çине тухакан кашни водителĕн хăйĕн ответлăхне никам каламасăрах туймалла.

**А. ЩЕРБАКОВ, административлă саккунсене пурнăça кĕртекен инспектор.**

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**